Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

Золотой фонд прессы 2011 · Золотой фонд прессы MMVIII · Золотой фонд прессы MMIX

33 (7887) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи çу (май) уйăхĕн 4-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Çурхи кун пĕлтерĕшне туять



**Çур аки – 2011**

***– Агротехникăна пăхăнассинче вăхăтра акни пĕлтерĕшлĕ. Çурхи нӳрĕкпе туллин усă курассине хамăрăн тĕп тĕллев тесе шутлатпăр, – терĕ сеялкăна ĕçе хатĕрленĕ çĕртен уйрăлнă май кĕске калаçăва пĕтĕмлетсе «Восток» хуçалăх хирĕсенче 11-мĕш çур акине хутшăнакан Дмитрий Андреевич Быков механизатор.***

***Уй-хирте кĕрхисене апатлантарнă тата нӳрĕк тытнă çĕрте, çуртрисем акассипе хăйне май пуян опыт пухнă çамрăк механизатор вăл. Çавăнпа хуçалăх ертӳçисем ăна чи ответлă участоксенче ĕç шанса параççĕ.***

***Мулкачкассисемпе Тереçсен кăçалхи çур акире кĕрхи культурăсене апатлантарнисĕр, вăл пусăсенче нӳрĕк тытса хăварнисĕр пуçне 250 гектар çуртрисем акмалла-лартмалла. Çакна кĕске вăхăтра туллин пурнăçлама вĕсем хатĕр пулни паян никама та иккĕлентермест***

*А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

## Район уй-хирĕсенче

**Ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çу уйăхĕн 3-мĕшĕ тĕлне çурхи уй-хирте мĕнле ĕçсем туса ирттернĕ:**

– ака кунĕ çывхарнă май хуçалăхсенче акмалли вăрлăха имçамлассипе ĕçлеççĕ. «ВаСем» хуçалăх ăна 240 процент (60 тонна) имçамланă. Ку ĕçсем «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче, «Свобода» кооперативра, В. Горбунов хресчен (фермер) хуçалăхĕнче та çӳллĕ шайра;

– пур хуçалăхра та çĕр улми вăрлăхне яровизацилеме кăларассипе тимлеççĕ. Çу уйăхĕн 3-мĕшĕ тĕлне районĕпе ăна 1840 тонна (64,6 процент) суйланă;

– хуçалăхсем 145 гектар çинче кĕрхи культурăсене апатлантарнă, 155 гектар çинче сӳрелесе нӳрĕк тытса хăварнă;

– пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 300 гектара яхăн нумай çул ӳсекен курăксене минераллă удобренисемпе апатлантарнă, 844 гектар çинче сӳрелесе нӳрĕк тытнă;

– «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество çуртрисем акма пуçланă.

## Хирте ĕç шавĕ ӳссе пырать

Çурхи кун çулталăк тăрантарать. Çак чăнлăха пурнăçа кĕртсе паян районти пур харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсенче те ака-суха ĕçĕ вăй илсе пырать. Акă çу уйăхĕн 4-мĕшĕ тĕлне Юнкă ял тăрăхĕнче вырнаçнă «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра 20 гектар çинче çурхи тулă акса та хăварчĕç.

– Ĕç калăпăшĕ пысăк-ха. Вĕсем вара кашниех вăхăтра пурнăçлассине ыйтаççĕ. Çур акине тĕплĕ хатĕрленнĕрен нихăш ĕçрен те çывăрса юлмасса шантарсах калатăп, – терĕ телефонпа çыхăнса илсен общество ертӳçи В. Кондратьев. Унăн сăмахĕнчен обществăн кăçалхи çур акире 300 гектар çуртрисем, 115 гектар çĕр улми, 26 гектар пахча çимĕç акса-лартса хăвармалли палăрчĕ.

Çĕр ĕçченĕсем çур акине хатĕрри «Свобода» хуçалăхăн паркĕнче тата хирте нӳрĕк тытассипе ĕçлекенсем патĕнче пулсан та яр уççăн курăнчĕ. Акă сӳре агрегатне Т-150 трактор çумне сыпăнтарассипе тăрмашакан Александ Ишаков трактора ĕçлеттерсе ячĕ. Кĕçех унпа пĕрле ĕçлекен Сергей Даниловпа Геннадий Иванов механизаторсем хăйсене шанса панă ДТ-75 «хурçă утсемпе» хире тухса кайрĕç. Вĕсем паян нумай çул ӳсекен курăксен пуссине сӳрелесе нӳрĕк тытассипе вăй хураççĕ.

– Çĕртме сухи çине кĕрсе кайма çĕр пулсах çитеймен-ха. Апла пулсан ытти ĕçсене кая хăвармасăр пурнăçламалла. Çак тĕллевпе ĕçлетпĕр те. Иртнĕ кунсенче, тĕслĕхрен, Р. Якимов механизатор Т-150 трактор хыçне УДА-3,1 агрегат çаклатса 15 гектар йышăнакан купăста анине пĕрремĕш хут ĕçе хатĕрлерĕ, – терĕ ĕнер сӳреленĕ хир еннелле тинкерсе хуçалăхăн тĕп агрономĕ А. Блинов.

Çур аки ĕçĕсем анлăланса пыни чуна савăнтарать.

**А. БЕЛОВ.**

## Вĕсен паттăрлăхĕ вилĕмсĕр

**Лару**

***Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 66 çул çитнине уявличчен шутлă кунсем юлчĕç. Хатĕрленӳ ĕçĕсем мĕнле пыраççĕ-ха? Çакăн пирки сăмах пынă уява хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕн черетлĕ ларăвĕнче. Ăна комитет председателĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л.Ю. Тарасова ертсе пынă.***

Тĕп ыйту – район центрĕнче митинг ирттересси. Ун пирки Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин каласа панă. Уяв валли уйăракан вырăн майăн 5-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех хатĕр пулать. Сценари пирки калас пулсан митинг уçăличчен СССР спорт маçтăрне В. Шалтыкова асăнса велоспорт енĕпе Муркаш – Уйкас Янасал маршрутпа спортсменсем старт илеççĕ. Уяв ирттернĕ чухнех çамрăк армеецсен парачĕ пулĕ. Унта çарпа патриотика клубĕсем 5 тата Муркаш лицейĕнчи кадетсен класĕ хутшăнаççĕ. Уяв мероприятийĕсем майăн 9-мĕшĕнче каçхине те пулĕç. Кăнтăрла хăйсен пултарулăхĕпе ачасем, каçхине вара художество пултарулăх коллективĕсем савăнтарĕç. Уяв мероприятийĕсем фейерверкпа вĕçленеççĕ.

Уяв кунĕнче вырăнсенче ирттерекен митингсенче ветерансене район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем саламлĕç. Культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева палăртнă тăрăх ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем уяв мероприятийĕсем ирттерессипе рекомендацисем илнĕ ĕнтĕ. Муркашра та, ытти ял тăрăхĕсенче те ветерансене киле пырса саламлассине йĕркелеме пăхнă. Социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Петрова вăрçă ветеранĕсемпе вилнĕ салтаксен тăлăх арăмĕсем валли парнесем хатĕр пулнине пĕлтернĕ. Çак пархатарлă ĕçре Ачасен районти пултарулăх çурчĕн воспитанникĕсем пуçарулăх кăтартнă. Вĕсем вăрçă ветеранĕсем, тăлăх арăмсем, тыл ĕçченĕсем валли асăну парнисем, сувенирсем хатĕрленĕ ĕнтĕ. Хальхи вăхăтра районĕпе вăрçăн 101 ветеранĕ, вилнĕ салтаксен тăлăх арăмĕсем 10-ăн, тыл ĕçченĕсем 1287 çын пурăнаççĕ.

Майăн 6-мĕшĕнче ветерансен районти канашĕн тата старейшинăсен район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи канашĕн ларăвĕ иртет.

Аслă Çĕнтерӳ уявне паллă тăвассипе хатĕрленӳ ĕçĕсем пур учрежденисенче те анлă сарăлнă. Районти музейсенче Çĕнтерӳ кунне халалланă экспозицисене çĕнетеççĕ, çĕннисене йĕркелеççĕ. Библиотекăсенче тематика выставкисем ĕçлĕç. Кунпа пĕрлех Аслă Отечественнăй вăрçăпа çыхăннă фильмсем кăтартĕç. Шкулсенче «Аслă Отечественнăй вăрçă çинчен кĕнекесем вулатпăр» акци иртет, ӳкерчĕксен, сочиненисен, сăвăсен конкурсĕсем пулаççĕ.

Пĕр сăмахпа каласан хатĕрленӳ ĕçĕсем анлă сарăлнă. Лару итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май Л.Ю. Тарасова вăрçă ветеранĕсем уяв кунĕнче хăйсене чăннипех те паттăрсем пек туйччăр тесе пĕтĕмпех тумаллине палăртнă. Çак туйăм вĕсенче яланлăхах юлтăр. Ветерансемшĕн, тăлăх арăмсемшĕн, тыл ĕçченĕсемшĕн вĕсен паттăрлăхĕ пирки манманни, çамрăксем вĕсемпе танлашма тăрăшни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

**Хамăр инф.**

**Чĕнӳ**

## Айтăр-ха тимлĕрех пулар!

Çак кунсенче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ О. Макаров республика çыннисене чĕнсе каланă. Сăмах пушар хăрушлăхĕн тапхăрĕ пуçланни пирки пырать. Вăрмансенче пушар тухас хăрушлăх пысăк. 100 тĕслĕхрен 90-шĕнче вăрманта вуткăвар алхаснин сăлтавĕ çынсенче, вĕсем çулăмпа асăрханусăр пулнинче.

Иртнĕ çул пысăк лаптăксем çинче пушарсем алхасни пуриншĕн те кăтартуллă пулăм пулмалла. Çынлăх туйăмне хаклас пулать, çут çанталăк тĕлĕшпе тимлĕрех пулни кирлĕ.

Вăрмансенче пулнă май уйрăмах асăрхануллă пулмалла, пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене çирĕп пурнăçламалла. Кăвайт чĕртме кирлĕ мар. Сӳнтермен шăрпăк е пирус та пушар сăлтавĕ пулса тăма пултарать. Кану вырăнĕсене çӳпĕ-çапăпа тултарса лартас марччĕ. Çут çанталăкпа хамăрăн пурнăçа сыхлар.

**Уйăхлăха хутшăнар**

## Йывăç лартар

Паян кашни ял тăрăхĕнчех 20-50 çул каялла лартнă вăрман тăрăхĕсем пур. Нумай уй-хирсене сухаласа тăманран çав вăрмансем çывăхĕнчи хирсене те вăрлăх акăннипе шăтнă калчасенчен çамрăк вăрмансем пусса илме пуçларĕç. Çырма-çатрасене, çулсен хĕррисене йывăççем лартма тăрсан йывăç калчисене, укçа парса иличчен, çав çамрăк чăтлăхсенчен кăкласа килсе лартни тăван ене татах та илемлетме пулăшни пирки манас марччĕ. Хăвăр юратнă йывăç калчисем кирлех пулсан вара вĕсене Ивановкăри питомникран туянма май пур. Кунта хурăн, хыр, чăрăш, лиственница т. ыт.те хунавĕсем пур.

**Г. СИМАКОВ,**
**район администрацийĕн тăван тавралăха сыхлакан специалисчĕ.**

## Салтаксен аллейи

Çĕр-шыв интересĕсене хӳтĕлесе инçетри Афганистанра интернационалла тивĕçе пурнăçланă салтаксем паянхи çамрăксемшĕн, ыран çар ретне тăма хатĕрленекенсемшĕн – хăйне евĕр паттăрлăх палли. Кашни ĕçрех вĕсем ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Аслăрах ăрурисен ырă пăçарăвĕсене малалла тăсакансем те вĕсемех.

Акă тавралăха илем кĕртес тата йывăççем лартас уйăхлăха хутшăнса Кашмашра пурăнакан Владислав Вячеславович Скворцов воин-интернационалист ырă пуçару турĕ. Кашмашри фельдшерпа акушер пунктĕнче ĕçлекен мăшăрĕпе Татьяна Аркадьевнăпа пĕрле вĕсем хыр вăрманĕнчи хăйсем тĕллĕн шăтнă хыр калчисене кăкласа килчĕç. Пĕрле пулсах Кашмашра «Афганецсен» аллейине уçрĕç. Урам хĕрринче пулнă ĕлĕкхи кивелнĕ сарая «Свобода» хуçалăхри строительсен бригадин вăйĕпе сӳтсе тирпейлерĕç. Кунти ĕçре те, сарай вырăнне карта тытассинче те В. Скворцов тимлесех ĕçлерĕ. Асăннă мăшăрăн Çĕнтерӳ кунĕ умĕнхи тăрăшулăхĕ сая каймасса, çак вырăнта пурăна-киле кĕрнеклĕ хырсем кашлама пуçласса шанас килет.

**А. ПЕТРОВ.**

**Саламлатпăр**

Юратнă мăшăра, хисеплĕ аттене, ырă кăмăллă асаттене – Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Токшик ялĕнчи **Николай Федорович ИЛЬГЕЧКИНА** 75 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Мĕн шутланисем пĕтĕмпех пурнăçланса пыччăр.

**Саламpа: мăшăрĕ, хĕрĕпе ывăлĕ, кинĕпе кĕрӳшĕ, тăванĕсемпе пускилсем.**

Дорогого мужа, отца, деда – **ИЛЬГЕЧКИНА Николая Федоровича** поздравляем со знаменательной датой – 75-летием. Желаем крепкого здоровья, счастья, долголетия, чтобы всегда окружали тебя любящие близкие и родные.

Что прошло – не жалеть,
Что осталось – испить до дна,
Надо жить, словно песню петь,
Хоть мелодия и трудна.

**С поздравлением жена, дочь, зять, сын, сноха, внуки и родные.**

**Çырăнтару**

**Хаклă вулаканăм!**
**Райхаçата иккĕмĕш çур çултан илсе тăма çырăнтарас тапхăр малалла пырать. Çырăнтару хакĕ унчченхиех – 191 тенкĕ те 70 пус (ултă уйăха).**

Выльăх тухтăрĕпе калаçатпăр

# Урни чирĕ – хăрушлăх

***Ялсемпе хуласенче йытăсемпе кушаксене усрамалли правилăсем пур. Çакă ăнсăртран мар. Мĕншĕн тесен шăпах кушаксемпе йытăсем – урни чирне анлă саракан тата сармалли тĕп çăлкуççем. Кунпа пĕрлех ялсем таврашне чăх-чĕп тытма тата çынсем кăларса пăрахнă каяшпа тăранса пурăнма пыракан выçăхнă тилĕсем те урни чирне сарма пулăшаççĕ. Çакăн пирки Патшалăх ветеринари службипе Чăваш Республикинчи Роспотребнадзор управленийĕ асăрхаттарсах тăраççĕ. Пирĕн районта та урни чирĕ тупăннă тĕслĕхсем пулмарĕç мар. Вĕсем кашнинчех яла пырса кĕнĕ тилĕпе çыхăннă. Урни чирне хирĕç прививка туман йытăсем урама пырса кĕнĕ тилĕпе çапăçса кайни пĕрре пулнă ӳкерчĕк мар. Çакнашкал кашни тĕслĕхпех irттерне тĕрĕслевсем урни чирĕн паллисене кăтартрĕç. Çавăнпа та ку чир тĕлĕшпе ăнлантару ĕçĕ irттерме паян хăнана районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцири ветврач-эпизоотолога Людмила Алексеевна БОЯРИНОВĂНА чĕнтĕмĕр.***

**– Людмила Алексеевна, урни чирĕн инфекцине саракансем – çак чирпе аптăракан чĕр чунсем. Уйрăмах йытăсемпе тилĕсем, кушаксем. Çапла мар-и?**

– Хирĕçле калама çук. Чăнах та урни чирĕн вирусĕ упранакан тĕп çăл куç вăл – тилĕ. Чăваш Республикинче иртнĕ çулсенче урни чирне вуншар регистрациленĕ. Вĕсен шутĕнче урни чирĕнчен прививка туман йытăсемпе кушаксем те сахал мар.

**– Мĕнпе çавнашкалах хăрушă-ха урни чирĕ?**

– Урни чирĕ вăл – хăрушă инфекци. Унран чирĕн инкубаци тапхăрĕнче çеç çăлăнса юлма пулать. Чир аталанма пуçласан вара... Раççей Федерацийĕнче юлашки 10 – 12 çул хушшинче чĕр чунсем хушшинче урни чирĕ сарăлас хăрушлăх пĕртте чакман-ха. Унпа çынсем чирлес хăрушлăх та пĕчĕк мар. Каламалла, пирĕн республикăра 1988 çултанпа çынсем хушшинче урни чирне тупса палăртни пулман, анчах çакă лăпланмалли сăлтав мар. 2000 – 2005 çулсенче çĕршывра урни чирĕн эпизоотийĕ сарăлас юхăм палăрма пуçларĕ. Çакăнта тилĕсем малти вырăнта тăраççĕ. Кунпа пĕрлех ялсенчи хуçасăр йытă-кушак та хăрушлăха вăйлатать кăна. Йытă-кушак тенĕрен çакна каласа хăварас килет. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ ялсемпе хуласенче йытăсемпе кушаксем усрамалли правилăсене çирĕплетнĕччĕ. Вырăнсенче çакна темшĕн пит пăхăнсах каймаççĕ-ха. Тĕрĕссипе вара хуçасăр йытăсем обществăшăн пысăк ыйту кăларса тăратрĕç. Вĕсем ял çыннисене выльăх-чĕрлĕхпе чăх-чĕп тытса сиен кӳнипе пĕрлех хăрушă чир саракансем те пулса тăчĕç. Тĕслĕх вырăнне урни чирнех илерха: урни чирĕпе чирлĕ йытă çыртсан, çын çийĕнчех тивĕçлĕ медицина пулăшăвĕ илмесен, çак чиртен сывалма çук. Çакна шута илсе вырăнсенчи выльăх тухтăрĕсем йытăсемпе кушаксене урни чирĕнчен профилактика прививкисем тăваççĕ. Анчах çакă ялсенчи пур йытă-кушак та профилактика мероприятийĕсене лекнине пĕлтермест, мĕншĕн тесен районта паян хуçасăр йытă-кушак та нумай чупса çӳрет. Кунта ял тăрăх администрацийĕсен тивĕçлĕ йышăнусем тумаллах.

**– Апла пулсан урни чирĕпе кĕрешесси – кулленхи тивĕç.**

– Тĕрĕс, анчах хуравĕ пĕр пирĕн ĕçпе çеç çыхăнман. Ял тăрăхĕсенче миçе ĕне-выльăх е чăх-чĕп пулнине тĕп-тĕрĕс калама пулать пулсан, хуçасăр чĕр чунсене шутласан ялсенче миçе йытă-кушак пулни пирки тулли хурав çукрах. Çапла вара шута илмен йытăсем вакцинациленмесĕрех юлаççĕ те ыттисемшĕн хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Ăна сирессипе вырăнсенче туллин ĕçлеççĕ теме çук-ха: йытă çыртнă тĕслĕхсене çине-çинех регистрацилетпĕр.

**– Хуçасăр йытăсемпе пур çĕрте те пĕрешкелех кĕрешмеççĕ тесе калама та юрамасть-тăр?**

– 2011 çул пуçланнă тĕле районта учета тăратнă 6630 йытăпа 8608 кушак, 9653 пуç майракаллă шултра выльăх шутланнă. Паян вĕсене урни чирĕнчен вакцинăласси пырать. Ял тăрăхĕсенче хуçасăр йытăсене тытассипе 12 бригада йĕркеленĕ. Вĕсен пĕрлехи вăйĕпе хуçасăр 247 йытăна сиенсĕрлетнĕ.

Пĕрне мухтаса теприне хурлани те кунта тĕрĕсех мар. Анчах чылай ял тăрăхĕнче ку ĕç çине алă сулни иккĕлле шухăш çуратать, урни чирĕнчен хӳтĕленме пĕрлехи тимлĕхе ӳстерме ыйтать. Кунта манăн Оринин, Юнкă, Çатракасси ял тăрăхĕсенче хуçасăр йытăсене тытассине йĕркелеменнине палăртсах хăварас килет. Хуçасăр йытăсем çак ял тăрăхĕсенче нумаййине шута илсен вырăнсенче ку ĕçе тăвасси паян та кая юлман тесе калатăп.

Хамăр ĕçе тивĕçлĕ шайра пурнăçласа кăçал та эпир урни чирĕнчен хӳтĕленсе харпăрлăх формине пăхмасăр майракаллă шултра выльăхсене, йытăсемпе кушаксене профилактика прививки тума пуçлатпăр. Çавăнпа та ял çыннисен хăйсен килĕсенчи йытăсене прививка тăвассинчен сиктерсе хăварас марччĕ. Ял тăрăхĕсенче те йытăсем ирĕкре хуçасăр чупса çӳренине чарма тивĕçлĕ мерăсем йышăнасчĕ. Ахальлĕн йĕрке пăсакансене административлă майпа явап тыттарма тивĕ.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

# Çĕнĕлĕхсене алла илеççĕ

Фермăри ĕçченсем



Вăл е ку ĕçре вăй хуракан çĕнĕлĕхсене алла илессипе тимлет пулсан вăл хăй ĕçне аван пĕлет, малашлăха пăхать, умри тĕллевсене курать. Çакнашкал шухăшсем çуралчĕç Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн Уйкас Янасалти сĕт фермине çитсе курсан. Кунта эпир район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕпе Т. Алексеевăпа çитрĕмĕр. Фермăсенчи ĕç йĕркелĕвĕпе дисциплини тивĕçлĕ шайра пулнине витесенчи тирпейлĕх кăтартать. Çакна Л. Петрова, С. Федорова, Г. Федорова, Г. Платонова, Т. Платонова, Р. Терентьева дояркăсем ĕçлекен сарайĕнче, Е. Клементьевăпа А. Аврамова пăхакан пăрусем патĕнче, тынасем тăракан витере куртăмăр.

– Ĕне сĕчĕ чĕлхи çинче тенине асра тытса выльăхсене тулăх тăрантарассине, пур апатпа перекетлĕ пулассине пирĕн ĕçченсем самантлăха та кун йĕркинчен кăлармаççĕ. Фермăран кунсерен 1600 кг сĕт сутăнать. Пĕчĕк пăрусем валли хăварнине шутласан ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм 10 кг ытларах пулать. Çакă районăн вăтам сăвăмĕнчен пысăкрах пулни пире савăнтарать, – терĕ выльăх пăхакансем ĕç вырăнĕсене тирпейленине сăнаса сĕт оборудованийĕн операторĕ В. Спиридонов **(сăн ӳкерчĕкре).**

Ĕç çине алă сулмасан ӳсĕмсем пулаççех.

**А. БЕЛОВ.**

Аса илтерӳ

# Вăрманта тимлĕ пул

Çут çанталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ çитрĕ. Тăван ен чечексен ытамне путнипе пĕрлех çывăхри вăрмансемпе ĕшнесем кайăксен юррипе тулчĕç. Иртнĕ кĕркунне тăкăннă çулçăсем тата çулса илеймен курăксем юр шывĕнчен типсе илчĕç те ума хăрушлăх кăларса тăратрĕç. Пире канăççăрлантараканни вăл – пушар! Çакна асра тытса вăрмана май уявĕсем уявлама тухаканăн паян кашнийĕнех тимлĕхе вуншар хут ӳстермелле. Асăрханулăх пирки юлташсене те, ытти çынсене те асăрхаттарсах тăмалла. Ахальлĕн...

Манăн паянхи сăмах вăрманти пушар хăрушсăрлăхĕ пирки. Ăшă çанталăка пула курăксем, йывăç çулçисем типсе кайрĕç. Вăрманта выртакан вутă-шанкă та пушар хăрушлăхне ӳстерет кăна. Çак вăхăтра вара ял-хула çыннисем вăрмана тухса канусем йĕркелеме пуçларĕç. Ку лайăх-ха, анчах вĕсем вăрманта пирус туртни, канăва йĕркеленĕ май вучах чĕртни – час-час тĕл пулакан йĕркесĕрлĕх. Çакă «хĕрлĕ автана» çул уçакан сăлтав пулни пирки вăрмана тухаканăн манас марччĕ. Аттеасаттесем лартса ӳстернĕ вăрман пирĕн ачамăрсемпе мăнукăмăрсемшĕн те упранса юлтăрччĕ.

Вăрмана канма тухакансен пушар хăрушсăрлăх правилисене пăснăшăн саккунпа айăплав пăхнине те манас марччĕ. Умри Çĕнтерӳ кунне йĕркене пăсмасăр савăнăçлă кĕтсе илер.

**А. КАСЬЯНОВ,**
**Ильинка лесничествин лесничийĕ.**

Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:180201:88, местоположение: установлено относительно ориентира, расположенного за пределами участка. Ориентир кладбище. Участок находится примерно в 250м от ориентира по направлению на юго-запад. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**29 апреля 2011 года администрацией Моргаушского района Чувашской Республики проведен аукцион на право заключения договоров купли-продажи земельных участков.**

**Победители аукциона: лот № 1- Думанский Е.Н., лот № 2- Александрова Р.В., лот № 3 – Ильина З.Б., лот №4 –Терентьев Э.А., лот № 5- Любимов О.Г., лот № 6- Соловьев В.А., лот № 7- Андреев В.Г., лот № 8-Думанский Е.Н., лот №9 -Дмитриева С.В., лот №10-Киселева Г.В.**

# Шкул ачин кулленхи режимĕ

Пурнăç йĕрки

Сывлăх – чи пысăк тупра. Апла пулсан ăна мĕн пĕчĕкрен упрамалла, пурнăç йĕркине тĕрĕс йĕркелеме тăрăшмалла. Сывлăха сыхлас обществăн даннăйĕсем тăрăх сывлăх 20 процент таран несĕл факторĕсенчен, 25 процент тавралăхран, 10 процент медицина службинчен тата 45 процент епле пурăннинчен килет.

Пирĕнтен нумайăшĕ асăрханă ĕнтĕ, ирхине вăрансан чĕр чунсем силленеççĕ, туртăнаççĕ, тасалаççĕ, апатланаççĕ. Çын тĕлĕшпе те çак пулăмсемех пулмалла пек. Шел пулин те хăшпĕр чухне эпир хамăр ачасене çакна вĕрентместпĕр тата хамăр та ку енĕпе пур чухне те ырă тĕслĕх кăтартмастпăр.

Тĕслĕхрен, будильник шăнкăртатсан та тепĕр 45 минут хушши вырăн çинче йăваланса выртать ача. Унтан 15 минут хушшинчех ирхи пĕтĕм ĕçе туса ĕлкĕрмелле унăн. Чи малтанах апат çимелле, çăвăнмалла, шăлсене тасатмалла, зарядка тумалла, туалета каймалла т. ыт.-те. Çавăнпа та физиологи процедурисен комплексĕ пăсăлать. Ирхине тĕрĕс апатланни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чылай чухне ачасем шкула пĕр стакан чей ĕçсе кăна е апатланмасăрах каяççĕ. Тепĕр чухне вĕсем шкул столовăйĕнче те апатланмаççĕ. Тĕрĕс мар апатлану сывлăха хавшатать, çакă вара ĕçлеслĕхе чакарать.

Ирхине ача пурнăçламалли ĕçе туса пĕтерейменсĕр шкула васкаса çитет, унăн шухăш-кăмăлĕ те пуçтарăнчăк мар. Çакăн пек ачан урокри тимлĕхĕ те çухалать, вĕренӳ материалне те алла илеймест вăл. Килти ĕççене те унăн ытларах хатĕрлеме тивет. Çакăн хыççăн уçăлса çӳреме те ачан вăхăчĕ сахалтарах юлать. Çапла вара ирхине вăхăтра тăрасси, апат çиесси, урок тăвасси, кĕнеке вуласси, телепередача пăхасси йăлтах режимпа пулса пымалла.

Пĕр вăхăтра апатланни ăна кирлĕ пек ирĕлме пулăшать. Çавăн пекех урока пĕр вăхăтра тума хăнăхни те ĕçе ăнăçлăрах пурнăçлама май парать. Ӳт-пӳ тĕрĕс-тĕкел кантăр тесен пĕр вăхăтра çывăрма выртассине те йăлана кĕртмелле.

Çапла вара кашнин çирĕп пурнăç йĕрки пулмалла. Ăна пăхăнса пырсан сирĕн ĕç-хĕл те тĕрĕс йĕркеленĕ, ăнăçу та ытларах пулĕ. Çакăн пирки нихăçан та манас марччĕ.

**В. МАТВЕЕВ,**
**«Гигиенăпа эпидемиологи центрĕ» филиалĕн пĕтĕмĕшле гигиена врачĕн пулăшуçи.**

Объявления

**ПРОТОКОЛ**

публичных слушаний «Об изменении разрешенного использования земельного участка» от 29 апреля 2011 года.

**Место проведения:** в здании администрации Кадикасинского сельского поселения, расположенного по адресу : Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Кораккасы, улица Новая , д.1.

**Начало слушаний:** 10 часов по московскому времени

**Окончание слушаний:** 11 часов 00 мин.

**Председательствующий: Лебедев Г.Г. –** глава Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района ЧР.

**Присутствуют: (Список прилагается.)**

**Повестка дня :**

1.Об изменении вида разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:072501:56

Повестка дня утверждена единогласно.

СЛУШАЛИ: главу администрации Кадикасинского сельского поселения- Лебедева Г.Г.

Лебедев Г.Г. – сообщил о поступившем заявлении от гражданина Игнатьева А.Г. с просьбой об изменении вида разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:072501:56 из категории «земли сельскохозяйственного назначения», местоположение: участок находится примерно в 550 м по направлению на северо-восток от ориентира магазин, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Республика Чувашская, р-н Моргаушский, с/п Кадикасинское, д. Калайкасы, ул. Молодежная, дом 86, разрешенное использование для организации и ведения крестьянского (фермерского) хозяйства» площадью 26631 кв.м. на «для организации посадок лесными насаждениями, предназначенными для обеспечения защиты земель от воздействия негативных природных явлений».

РЕШИЛИ: 1 «Одобрить проект постановления по изменению вида разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:072501:56 из категории «земли сельскохозяйственного назначения», местоположение: участок находится примерно в 550 м по направлению на северо-восток от ориентира магазин, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Республика Чувашская, р-н Моргаушский, с/п Кадикасинское, д. Калайкасы, ул. Молодежная, дом 86, разрешенное использование: для организации и ведения крестьянского (фермерского) хозяйства» площадью 26631 кв.м. на «для организации посадок лесными насаждениями, предназначенными для обеспечения защиты земель от воздействия негативных природных явлений».

2. Материалы публичных слушаний (протокол, заключение) в течение 10 дней опубликовать в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» и на сайте администрации Кадикасинского сельского послления Моргаушсокго района Чувашской Республики.

Лебедев Г.Г. подвел итоги публичных слушаний, объявил их закрытыми.

**Глава администрации Кадикасинского сельского поселения Г.Г. ЛЕБЕДЕВ.**

**Участники долевой собственности Андреева Г.П., Андреев А.Б., Андреев Б.В., проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Тойшево, ул. Мартынова, д. 17, сообщают о намерении выделить земельные участки по следующим ориентирам и площадям: Андреева Г.П. и Андреев А.Б. каждый по 1,46 га пашни в поле № 2, участок № 1 и каждый по 0,21 га пастбища, расположенных южнее д. Тойшево; Андреев Б.В. – 2,92 га пашни в поле № 2, участок № 1 и 0,42 га пастбища, расположенных южнее д. Тойшево из земель СХПК им. Суворова, Тораевского сельского поселения, Моргаушского района, Чувашской Республики.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Тораево, ул. Базарная, д. 5 (администрация Тораевского сельского поселения).**

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

**Кадастровым инженером Ивановой Оксаной Николаевной, 428000 г. Чебоксары, ул. К. Воробьевых, д. 10, E-mail: ooozemly@ramrbler.ru, (8352)62-66-16, квалификационный аттестат № 21-11-26 от 08.02.2011 г., в отношении земельных участков в кадастровых кварталах 21:17:190301; 21:17:190501, расположенных: пашни в поле № 2, участок № 1 и пастбища, расположенный южнее д. Тойшево, выполняются кадастровые работы по выделу в счет земельных долей в праве общей долевой собственности из земель СХПК им. Суворова, Тораевского сельского поселения, Моргаушского района Чувашской Республики.**

**Заказчиками кадастровых работ являются: Андреева Г.П., Андреев Б.В., Андреев А.Б. проживающих по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Тойшево, ул. Мартынова. д. 17.**

**Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границы состоится 4 июня 2011 г. в 8 часов 00 минут по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. К. Воробьевых, д. 10.**

**С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: г. Чебоксары. ул. К. Воробьевых, д. 10.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельных участков на местности принимаются с 4 мая 2011 г. по 4 июня 2011 г. по адресу: г. Чебоксары, ул. К. Воробьевых, д. 10.**

**Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: СХПК им. Суворова (коллективно-долевая собственность), администрация Тораевского сельского поселения.**

**При проведении согласования местоположения границ земельных участков при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.**

* * *

**Итоги публичных слушаний по проекту муниципального правового акта**

**«Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

**30 апреля 2011 года прошли публичные слушания по проекту муниципального правового акта**

**«Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

**Приняты следующие рекомендации участников публичного слушания: одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка», из категории земли населенных пунктов.**

**- с кадастровым номером 21:17:220401:127, местоположение: Респ. Чувашская, р-н Моргаушский, с/п Чуманкасинское, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:220401 разрешенное использование для «содержания и обслуживания жилого дома» площадью 500 кв.м. на «для ведения личного подсобного хозяйства».**

# «Спортпа туслӑ пулӑр, вара сывлӑхлӑ пулатӑр»

**Ҫуллахи спорт сезонӗ уҫӑлчӗ**

***Ҫулсеренех майӑн 1-мӗшӗнче районта ҫуллахи спорт сезонне уҫаҫҫӗ. Кӑҫалхипе 7-мӗш хут ку ӑмӑрту Муркаш райпо парнисене ҫӗнсе илессишӗн иртрӗ. Муркашри искусство шкулӗн ачисем пурне те илемлӗ ташӑпа саламланӑ хыҫҫӑн спорт уявне хаваслӑ лару-тӑрура уҫнӑ май райпо Канашӗн ертӳҫи Б.В. Андреев ӑмӑртӑва хутшӑнакансене ӑнӑҫу сунчӗ.***

Пуҫтарӑннисене пурне те Ҫуркуннепе Ӗҫ тата ҫак кун йӗркеленӗ спорт уявӗпе район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов саламларӗ. Ӑмӑрту Аслӑ Ҫӗнтерӳ кунӗ умӗн иртнӗ май ветерансем ҫӗнсе илнӗ мирлӗ пурнӑҫра пирӗн тӑрӑшса ӗҫлемеллине, вӗренмеллине тата спортра туслӑ пулмаллине палӑртрӗ Юрий Александрович.

– Ҫуллахи спорт сезонне лайӑх кӑтартусемпе пуҫлар та, вӗҫлессе те пысӑк ҫитӗнӳсемпе вӗҫлемелле пултӑрччӗ, – терӗ район администрацийӗн пуҫлӑхӗ.

Ю.А. Иванов хамӑр районти В. Егорова, В.Соколова, Н.Охотникова, П.Трофимов паллӑ спортсменсем тата ыттисем пекех спортра ҫӗнтерӳсем тума ырлӑх-сывлӑх сунчӗ.

Чӑваш Республикин Президент Администрацийӗ, Чӑваш Республикин Правительстви ячӗпе Муркашсене виҫҫӗлле уявпа Чӑваш Республикинчи хӑй тӗллӗн ҫӳрекен машинӑсемпе ытти техникӑна техника тӗлӗшӗнчен пӑхса тӑракан Патшалӑх инспекцийӗн ертӳҫи – республикӑри тӗп патшалӑх инженер-инспекторӗ В.П. Димитриев саламларӗ. Муркашсене республикӑра пур енӗпе те ҫӗнсе илнӗ ырӑ ята малалла та ҫӳлте тытса пыма ырӑ сунчӗ. Ҫавӑн пекех вӑл республикӑра ҫурхи ӗҫсем, килти хушма хуҫалӑхсенче те ӗҫ пуҫланнине палӑртрӗ.

– Апла пулин те спортра туслӑ пулма вӑхӑт тупма тӑрӑшӑр,– терӗ Владимир Павлович.

Шупашкарти олимп резервӗсем хатӗрлекен ачасемпе ҫамрӑксен 8-мӗш номерлӗ спорт шкулӗн ертӳҫин ҫумӗ О.И. Андреев Муркашсем Республика, Раҫҫей спорт аталанӑвӗнче пысӑк тӳпе пулнине палӑртрӗ. Вера Соколова ав Раҫҫейӗн хӗллехи чемпионатӗнче ҫӗнӗ, халиччен никам туман рекорд тума пултарчӗ. Н. Охотникова Раҫҫей, Европа чемпионачӗсенче, Пӗтӗм тӗнчери универсиадӑна хутшӑнма хатӗрленет.

– Ҫитӗнӳсем тума вара Муркашсем пӗлеҫҫӗ, – ӑмӑртура ӑнӑҫусем сунчӗ Олег Иванович.

Уява пуҫтарӑннисене ҫавӑн пекех тӗнче класлӑ спорт мастерӗ Н. Охотникова, Муркаш ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ Н.И. Никитин саламларӗҫ.

Ӑмӑрту «Сывлӑх» ФСК хыҫӗнчи чупав трасси ҫинче иртрӗ. Эстафетӑна хутшӑннӑ пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан 10 тӗп шкултан Тойкилтсем ҫӗнтерчӗҫ. Кашмашсемпе Шатракассисем хыҫҫӑнхи парнеллӗ вырӑнсене тухма пултарчӗҫ.

Ҫак кун 400 метрлӑ дистанцире пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан 14 вӑтам шкул команди вӑй виҫрӗ. Чи малтан дистанцие Ярапайкасси команди вӗҫлерӗ. 2 вырӑна Калайкасси, 3 вырӑна Муркаш шкул командисем йышӑнчӗҫ.

Физкультура коллективӗсен 6 командинчен чи ҫаврӑнӑҫулли «Свобода» хуҫалӑх команди пулчӗ. Районти шалти ӗҫсен пайӗн командипе Катькас ял тӑрӑхӗн командисем 2 тата 3 вырӑн хуҫисем пулса тӑчӗҫ.

Ҫемье командисем те илем кӳчӗҫ ӑмӑртӑва. Хорнуй ял тӑрӑхӗнчи Тойкилтӗри Светланӑпа Эдуард Васильевсен ҫемйипе нихӑш те танлашаймарӗ. Ӑмӑртӑва хутшӑннӑ 10 ҫулхи Виола пиччӗшӗпе иккӗшӗ те ашшӗпе амӑшӗ пек спортра маттур пулма тӑрӑшаҫҫӗ иккен. Чуманкасси ял тӑрӑхӗнчи Маринӑпа Сергей Романовсем те Николай ывӑлӗпе хутшӑнчӗҫ ӑмӑртӑва, 2 вырӑн йышӑнчӗҫ. Муркаш ял тӑрӑхӗнчи Алевтинӑпа Сергей Рожковсем 3 вырӑна тухма пултарчӗҫ. Эстафетӑна Никита ывӑлӗпе хутшӑнчӗ вӗсем.



Ҫӗнтерӳҫӗ-командӑсем пурте куҫса ҫӳрекен кубока, дипломсене тата 2 пин тенкӗлӗх тавар илме май паракан сертификата тивӗҫрӗҫ.

2 тата 3 вырӑн хуҫисене вара дипломсем, 1,5 тата 1 пин тенкӗлӗх тавар илме май паракан сертификатсем пачӗҫ. Ӑмӑртӑва хутшӑнакансенчен кашниех медаллӗ пулчӗ.

Спорт ӑмӑртӑвӗнчен ветерансем те айккинче юлмарӗҫ. Эстафетӑна хутшӑннӑ 8 ветерантан арҫынсем хушшинче малти виҫӗ вырӑна И.В. Воробьев (Оринин ял тӑрӑхӗ), М.А. Романов (Муркаш ял тӑрӑхӗ), Ю.М. Спаскин (Муркаш райповӗ) йышӑнчӗҫ. Хӗрарӑмсенчен ӑмӑртӑва хутшӑннӑ пӗртен-пӗр хӗрарӑм-ветеран А.Ф. Анисимова (Ҫатракасси ял тӑрӑхӗ) ҫӗнтерчӗ. Александра Федоровна ҫавӑн пекех ӑмӑртӑва хутшӑннӑ чи аслӑ ветеран (71 ҫулта) пулнӑран парнене-сертификата (500 тенкӗлӗх) тивӗҫрӗ. Эстафетӑна хутшӑннисенчен чи кӗҫӗнни пулнӑ май Муркаш ял тӑрӑхӗнчи 6 ҫулхи Артем Андреев та 500 тенкӗлӗх тавар илме май паракан сертификата тивӗҫрӗ.

– Спортра туслӑ пулӑр, вара сывлӑхлӑ пулатӑр, – терӗ вӑл уҫӑ сассипе.

Кунпа Муркаш райпо Канашӗн ертӳҫи, ӑмӑрту хуҫи Б.В. Андреев та килӗшет. 50 ҫултан иртнисемпе пӗрле Борис Васильевич хӑй те чупрӗ.

– Ҫӑвӗпе пурӑнмалӑх, ӗҫлемелӗх хавас кӑмӑл, вӑй-хал ҫитет халь, – терӗ вӑл финиша ҫитсен.

Эппин умри тӗллевсене пурнӑҫламалли ҫеҫ юлать.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Сӑн ӳкерчӗкре: Б.В. Андреев ҫӗнтерӳҫӗсене саламлать.**

**Врач сӗнет**

# Аборт сиен кӳмесӗр иртмест

Паянхи социаллӑ демографи лару-тӑрӑвӗнче аборт ыйтӑвӗ питӗ ҫивӗч тӑрать. Раҫҫейре ҫак операцие тума 1920 ҫулта саккунлӑ ирӗк панӑ. Паян вара мӗн чухлӗ аборт тунипе, ун хыҫҫӑнхи йывӑрлӑхсене пула хӗрарӑмсем пурнӑҫран уйрӑлнипе ҫӗр-шывра халӑх сывлӑхне сыхласси мӗнле шайра пулнине те хаклама пулать.

Чылай хӗрарӑм ҫие юлнӑ хыҫҫӑнах аборт тунине сиенлӗ тесе хакламасть. Вӗсен ӑшӗнчи тепӗр ҫыннӑн чунӗ кӗмен-ха тесе шутлаҫҫӗ вӗсем. Ку вара пачах та апла мар.

Ӑсчахсем акӑ мӗн ҫирӗплетеҫҫӗ. 18 кунран пурнӑҫ тӗввин (зародыш) чӗре тапнине туйма пулать иккен. 7 эрнерен унӑн шалти органӗсем йӗркеленеҫҫӗ, 10 эрнерен вара унӑн пӗтӗмпех пур – организмӗ ҫуралнӑ ачанни пекех. 13 эрнере вӑл пуҫне те пӑрма пултарать, тӗрлӗ хусканусем те тӑвать, пит-куҫа тӗрлӗрен вылятать, пӳрнине ӗмет. Аборт тӑвас текен хӗрарӑм вара ӑна пурнӑҫран уйрӑлтарать.

Аборт туни сиенлӗ-и? Нумай ҫамрӑк хӗрарӑм ҫапла ыйтать. Аборт тӑвакансен малашнехи сывлӑхӗ, амӑш пуласси иккӗленӳллӗ. Ҫак операци хыҫҫӑн ҫие юласси урӑх пулмасан та пултарать. Хыҫҫӑн ача ҫуратасссипе ҫыхӑннӑ йывӑрлӑхсем пулаҫҫӗ.

Ҫулсеренех тӗнчери пин-пин хӗрарӑм аборт тунӑ хыҫҫӑн инвалид пулса юлать, урӑх ача та ҫуратаймасть.

Ҫак операцие тума килӗшнӗ хӗрарӑм хӑйне нумай вӑхӑта айӑплӑ туять, лӑпкӑ тӗлӗксем курманнипе аптрама пултарать. Упӑшка патне те сиввӗрех туйӑмсем ҫуралма пултараҫҫӗ. Аборт хыҫҫӑн ҫемье арканни те час-часах пулать.

Аборт пӗр йӗрсӗр иртмест, вӑл яланах хӑрушӑ тата сиенлӗ. Хӗрарӑмсен чир-чӗрӗсем те нумай чухне аборт тунӑ хыҫҫӑн пуҫланаҫҫӗ: амалӑхпа ҫыхӑннисем те, мастопати те, шыҫӑ чирӗсем те...

Ҫавӑнпа та пӗр пысӑк сӗнӳ – сыхланмалла. Ҫакӑн пирки, хисеплӗ хӗрарӑмсем, нихӑҫан та ан манӑр. Халӗ майсем ҫителӗклӗ. Врачсемпе канашлама ан вӑтанӑр. Ку вӑл – пирӗн пурнӑҫ, пирӗн ачасен пурнӑҫӗ. Больницӑсенче ҫемье планлама пулӑшакан пӳлӗмсене ахальтен йӗркелемен. Вӗсен пулӑшӑвӗпе туллин усӑ курмалла.

**Н. ЛОБАЧЕВА,**
**аслӑ категориллӗ врач.**

**Милици хроникинчен**

## Саккунсӑр тупӑш

Харкашу-хирӗҫӳ, йӗркене пӑсасси ытларах мӗн чух эрехрен пуҫланать. Эрехне вара лавккара сутни ҫитмест, уйрӑм ҫынсем те килӗсенчех ӗҫме юрӑхсӑр шӗвек сутса услам тӑваҫҫӗ. Акӑ Мӑн Сӗнтӗрте пурӑнакан «пенси каркӑкӗ» те хушма тупӑш илессипе тӑрӑшнӑ, тавраи ҫынсене хӑй сутнӑ спиртлӑ шӗвекпе «савӑнтарнӑ»: ҫур литрне 60 тенкӗпе, пӗр литрне 140 тенкӗпе «ӑсатнӑ».

Халӗ вара тупӑшран «налук» тӳлеме вӑхӑт.

**Пичете районти шалти ӗҫсен пайӗн материалӗсем тӑрӑх хатӗрленӗ.**

**Районти прокуратурӑран**

## Усал йӑлапа ан туслаш

Суту-илӳ точкисенче наркотикпа усӑ курма юраман туртмалли ытти хутӑшсем сутнине, сӗннине прокуратура тата ку енӗпе яваплӑ ытти ӗҫченсем кулленех тӗрӗслеҫҫӗ. Яваплӑ ӗҫченсем Муркаш пасарӗнчи, Муркаш тата Мӑн Сӗнтӗр райповӗсен суту-илӳ точкисенче, аптекӑсенче пулчӗҫ. Усӑ курма юраман япаласене пропагандӑланӑ, наркотика тата пуҫа минретекен ытти веществосене рекламӑланӑ, вӗсене ҫул ҫитмен ҫамрӑксене сӗннӗ фактсем тӗрӗслев вӑхӑтӗнче тӗл пулман.

**Пичете районти прокуратура материалӗсем тӑрӑх хатӗрленӗ.**


**Пӗлтерӳсем. Объявления**

**6 мая с 8-00 до 16-00 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Белорусской фабрик и других российских производителей. 2-5.**

**Обслуживание свадеб на «РЕТРО» кабриолете, цена договорная. Тел.: 8-953-010-21-34.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 10-10.**

* * *

**Продаем керамзитобетонные блоки (20х20х40, 12х20х40), брусчатки, тротуарные плитки (0,30х0,30х0,25; 0,50х0,50х0,5), бордюрный камень. Доставка. Цена договорная. Тел.: 8-906-132-07-42, 8-960-304-49-32. 5-5.**

* * *

**Продаем доски: обрезные, необрезные, брус любого сечения, срубы из оцилиндрованного бревна. Доставка бесплатно. Тел.: 8-919-679-18-11. 1-5.**

* * *

**Продается циркулярный станок трехфазный 3 квт 3000 об/мин, строгалка 30 см. Тел.: 8-962-599-42-18.**

* * *

**Продаю овес, ячмень на семена, на фураж. Покупаю коров. Тел.: 8-919-671-96-26.**

* * *

**Июнь уйӑхӗнче пӗрремӗш пӑруламалли хура-шурӑ тынашки сутатпӑр. Тел.: 64-5-66.**

* * *

**Продается земельный участок 40 соток под строительство в с. Моргауши по ул. Новая. Имеется летняя веранда, участок огорожен. Тел.: 8-903-066-66-04.**

* * *

**СХПК ПЗ им. Е. Андреева требуются на постоянную работу механизаторы, зоотехник, доярка, заведующий фермой. Зарплата достойная и своевременная.**

* * *

**Иккӗ пӑрулянӑ хӗрлӗ тӗслӗ ӗне сутатпӑр.**
**Тел.: 8-906-132-86-43.**

* * *

**Ӗне, вӑкӑр, тына, пӑру, сурӑхсем туянатпӑр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57.**

* * *

**Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, торф с доставкой. Скидки. Тел.: 8-927-668-70-15. 5-12.**


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270501:83, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, северная часть кадастрового квартала 21:17:270501, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270501:91, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, северная часть кадастрового квартала 21:17:270501, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:170203:100, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:170203, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270501:94, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, северная часть кадастрового квартала 21:17:270501, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫат редакцийӗн коллективӗ кунта корректорта ӗҫлекен О.Ф. Суворовӑн пиччӗшӗ

**Константин Филиппович**
**ВОЛКОВ**

сарӑмсӑр вилсе кайнӑ пирки унӑн ҫемйипе тата тӑванӗсемпе пӗрле чӗререн хурланни ҫинчен пӗлтерет.

Муркашри вӑтам шкул коллективӗ кунта вырӑс чӗлхипе литературине вӗрентекен Л.А. Волковӑн хуняшшӗ, информатика учителӗнче вӑй хуракан О.К. Волковӑн ашшӗ

**Константин Филиппович**
**ВОЛКОВ**

сарӑмсӑр вилсе кайнӑ пирки вӗсен ҫемйипе тата ҫывӑх ҫыннисемпе пӗрле чӗререн хурланни ҫинчен пӗлтерет.

Правление СХПК ПЗ им. Е. Андреева выражает глубокое соболезнование Семенову В.И., председателю СХПК ПЗ им. Е. Андреева по поводу безвременной кончины брата

**СЕМЕНОВА**
**Леонида Иосифовича.**


**Муркаш районӗнчи «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чӑваш Республикин Культура, национальноҫсен ӗҫӗсен, информаци политикин тата архив ӗҫӗн министерстви.
ЧР Культура, национальноҫсен ӗҫӗсен, информаци политикин тата архив ӗҫӗн министерствин «Муркаш районӗн «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫат редакцийӗ» автономи учрежденийӗ.

**Тӗп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чӑваш Республики, Муркаш ялӗ, Мир урамӗ, 9А ҫурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тӗп редактор - 62-1-36, яваплӑ секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнӑҫ пайӗ - 62-2-82, экономика тата социаллӑ пурнӑҫ пайӗ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Ҫыхӑну, информаци технологийӗсен тата массӑллӑ коммуникаци сферине пӑхса тӑракан Федераллӑ службӑн Чӑваш Республикипе – Чӑваш Енпе ӗҫлекен управленийӗ 2009 ҫулхи раштавӑн 7-мӗшӗнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленӗ.

Калӑпӑшӗ 1,5 пичет листи.
Ал ҫырӑвӗсене рецензилемеҫҫӗ, каялла тавӑрса памаҫҫӗ, 2 страницӑран пысӑкраххисене йышӑнмаҫҫӗ.
Рекламӑпа пӗлтерӳсен чӑнлӑхӗшӗн вӗсене паракансем яваплӑ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСӖ: 54822.
Хаҫат чӑвашла юн тата шӑмат кунсерен тухать.
Номер дежурнӑйӗ Белов А.П.
Пичете панӑ 03.05.2011 ҫ.
Пичете памалли вӑхӑт:
графикпа – 17 сех. 20 мин,
чӑннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4337.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Ҫӗнтерӳ ялавӗ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.